Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

1938
ФЕВРАЉ
1
ЫТЛАРИКУН
25 (4838) -мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ССР СОЙУЗ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ



ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиум председателĕпе заместителĕсем. Варринче: М. И Калинин. Çӳлте, сулахайран сылтăмала: И. С. Хохлов, Г. И. Петровский, Н. Йа. Нателевич, Касумов Мир Башир Фатдах оглы, Ф. Е. Махарадзе, М. П. Папйан. Айалта: Бабайев Хивали, Ахунбабайев Йулдаш, Шагадайев Мунавар, Умурзаков Нурбапа, Салихов Мурат тата Президиум секретарĕ А. Ф. Горкин.

(Сойузфото)

ССР СОЙУЗ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМ ЧЛЕНĔСЕМ



М. Д. Багиров. Л. П. Берийа. В. К. Блӳхер. С. М. Буденный. А. А. Волков. Динмухаметов Галей. А. А. Жданов.



Й. М. Каганович. А. В. Косарев. Н. К. Крупскайа. Г. М. Маленков. П. Г. Москатов. К. И. Николайева. А. Н. Петровский.



И. И. Сидоров. И. В. Сталин. А. Г. Тахтаров. С. К. Тимошенко. А. И. Угаров. И. Ф. Федько. Н. С. Хрушчев.



Р. К. Ибрагимов. М. Ф. Шкирйатов. Йусупов Усман.

ПРОГРАММĂ ПАНĂ — ĂНА ПУРНĂÇА КĔРТМЕЛЕ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне çирĕплетсе пачĕ. Çак план иртнĕ çулсенчи плансенчен чылай урăхла. Иртнĕ çулсенче çураки планне, çĕртме сухи планне тата кĕраки планне уйрăмăн парса пынă пулсан, 1938 çулхи план çине çулталăкри ĕçсене пурне те кĕртнĕ. Çакă вăл чи малтанах ширĕн колхозсемпе совхозсем организацийе хуçалăх йенчен çирĕпленсе пынине, колхоз кадăрĕсем ӳссе пынине пĕлтерет.

Кăçалхи государствă планĕнче иртнĕ çулхи плансенчен тата тепĕр уйрăмлăх пур. Вăл — акмали пĕтĕм çĕр лаптăкне ӳстерсе хушăрах, тĕштырăсем акмали лаптăкĕ пĕтĕмпе 3 мĕлйун гектара йахăн чакарни. Çакă вăл Совет Сойузĕ тĕштырă ыйтăвне татса хунине, Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă илме лартнă задачăна колхозсемпе совхозсем пурнăçа кĕртсе çитерме сывхарнине пĕлтерет. Çавăнпа пĕрлех вăл тата нумай тырпул туса илес ĕçе малашне тĕштырăсене акмали çĕр лаптакне аслăлатнипе мар, тырпул тухăçлăхне ӳстерни урлă туса пымалине кăтартса парат, выљăх апачĕ тума акмали културăсем ваљљи лаптăка ӳстерсе социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç никĕсне çирĕплетет.

1928 çулхи государствă планĕн тĕп шухăшĕ вăл — çак çулта пĕтĕм йалхуçалăх продукцине иртнĕ çулхинчен ытларах туса илесси, çулсерен 7—8-шар мĕлйард пăт илес задачăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитересси пулат.

План панă. Планăн тĕп шухăшĕ колхозниксен шухăшĕсемпе тата ĕмĕчĕсемпе таччăн çыхăнса тăрат. Парти, совет организацийĕсем умĕнче, колхозниксен активлăхне, производствăри хастарлăхне мобилизацилесе, 1938 çулта йалхуçалăх йенĕпе çĕнĕ пысăкрах çитĕнӳ тăвас задач тăрат. Массă хушшинче партилĕ-политикăла ĕçе сарса йани, социалисăмла ăмăртува чăннипех организацилени — çав задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре шанчăклă майсем пулса тăраççĕ.

1938 çулхи йалхуçалăх планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси, чи малтанах, çураки ĕçне мĕнле хатĕрленсе ирттеринчен килет. Анчах та, чылай районсенче çуракине хатĕрленес ĕç кайа йулчĕ. Кирлĕрен те кирлĕрех ĕçсем — вăрлăх фондне тăвасси, вăрлăх тасатасси, суртлă вăрлăх улăштарса хатĕрлесе хурасси, çавăн пекех тата йалахуçалăх машинисене йусаса çитересси хаљ те йулса пыраççĕ.

Кăçал агротехникăла ĕçсене иртнĕ çулхисенчен темиçе хут нумайрах туса ирттермеле. Çавах та халлĕхе çак ĕçпе те чылай районсем мухтанма пултараймасçĕ. Акă, Шупашкар районĕнче районĕпе пурĕ 100 пин лав торф, 174 пин лав тислĕк кăларас выранне, йанварĕн 25 мĕшне çав плана мĕн пурĕ те 10—20 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

1938 çулта тырпулсен тухăçне уйрăмăнах суртлă вăрлăхсем акнипе хăпартасси — йалхуçалăхне малала хăпартас ĕçре чи паха задач пулат. Анчах суртлă вăрлăх улăштарас ĕç кайра пырат. Шупашкар районнех илер. Кунта пурĕ 87 колхозăн 4695 центнер суртлă вăрлăх улăштармала пулнă пулсан, йанварĕн 25-мĕш тĕлне мĕн пурĕ те 3 колхоз çеç улăштарса илнĕ. Елĕк районĕнче пурĕ 2265 центнер тула вăрлăхĕ улаштармала пулсан, йанварĕн 14-мĕшне 411 центнер çеç улаштарнă, сĕлĕ 1800 центнер выранне 793 центнер улăштарнă. Тăвай районĕнче йанварĕн 25-мĕшне уйăрса хунă вăрлахсенчен мĕн пурĕ те 45 процент çеç сурланă. Трак районĕнче пурĕ 3894 плуг йусас выранне 1389 плуг çеç йусаса лартнă.

Çуракине тухас вăхăт çывхарсах килет. Çуракине тухиччĕнхи вăхăтра çуракинче мĕн кирлине пурне те туса çитерме колхозниксемпе колхозницăсене çав ĕçене туса çитерме моблизацилеме пĕлсен çеç епĕр сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕн çуракине ăнăçлăн иртгерĕ 1938 çухи государствă планне пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

Папанин ушкăнне пăр çинчен мĕнле илсĕ тухаççĕ

Çурçĕр çулĕсен Тĕп тытăмĕн начаљникĕпе — О. Й. Шмидт йулташпа калаçни

Куççа çӳрекен пăр çинчи „Çурçĕр пољусĕ" станцинче совет тĕпчевçисем сакăр уйăх хушши ытла ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçне пĕтĕм тĕнче куллен кун сăнаса пырат.

Тăвата герой тăварăнасса пĕтĕм халăх кала ма çук кĕтет.

Папанин ушкăнĕ куççа çӳрекен пăр çинче мĕн чухлĕ ытларах вăхăт ĕçлет, вăл аслăлăха ваљљи çавăн чухлĕ ытларах материал парат. Анчах геройсене пăр çинче ытлашши нумай вăхăтлăха хăвармала нимĕнле нуша та çук. Çавăнпа епĕр Папанин ушкăнне пăр çинчен Гренланди тинĕсĕнче, урăхла каласан, вăл Атланти океанне куçиччен илсе тухас тетпĕр.

Експедици планне çав ĕçе март уйăхĕнче туса ирттермеле тунă. Унта март уйăхĕнче те тĕтрелĕ кунсем уйар кунсенчен ытларах пулаççĕ, анчах урăх вăхăтра çанталăк условийĕсем тата йапăхрах. Папанин йулташ хăй те вĕсене март уйăхĕнче илсе тухсан аванрах пулат, тесе шутлат.

„Таймыр" ледокол çинче кайакан експедицин пĕрремĕш задачи çакă пулат. Унăн, пољусран килекен пăр патне çитсенех, çителĕклĕ тикĕс тата аслă пăр уйĕ тупмала. Çав пăр уйĕ ледокол çинче самољотсене антарма йурăхлă пултăр. Ку ĕçре, пире „Мурманец" хурал карапĕ разведкă туни пысăк усă парĕ. Çанталăк йурăхлă пулсан, çав пăр çинчи аеродромран куççа çӳрекен станци патне вĕçмеле пулат.

Папанин лагерĕ патне вĕçнĕ чухне епĕр кăнтăр кунĕпе усă курма тăрăшăпăр. Унта март уйăхĕнче темиçе сехетлĕхе хĕвел тухат. Çанталăк лайăх тăнă чухне лагер патне çĕрле те вĕçме пулат. Ку ĕçре радио тăрăх çыхăнса тăни пит паха пулат.

„Таймыр" ледокол çинчи експедицийе лайăх хатĕрленĕ. Унăн ĕçĕ ăнăçлă пуласса шансах тăмала. Анчах, çапах та, епĕр, правителствă хушнипе, Папанин лагерĕ патне вĕççе каймали експедици хатĕрлерĕмĕр. Вĕççе каймали експедицин хăвăрт вĕçекен икĕ самољот пулат, — самољочĕсем икшер моторлă. Вĕççе каймали експедицин начаљникĕ пулма Совет Сойузĕн Геройне Спирин йулташа уйăрнă. Икĕ машинĕ те Мурманскра пулаççĕ, кирлĕ пулсан Баренцбурга (Шпицберген) вĕççе пыраççĕ. Норвеги правителствви пире Баренцбургра Спирин йулташăн експедицин вĕçев никĕсне тума ирĕк пачĕ.

„Ермак" ледокол, ăна часах йусаса пĕтереççĕ, Папанин ушкăнне пăр çинчен илсе тухакан експедицин резерври карапĕ пулат.

Епĕ, експедици начаљникĕ, Мускавран Мурманска февралĕн 3-мĕшĕнче кайатăп. „Таймыр" ледокол Гренланди тинĕсне февралĕн 10-мĕшĕ патнели вăхăтра тухса кайат. Çапла епĕр пăрсем тăракан района пољус йенче çĕрле иртнĕ вăхăтра — февралĕн 18—20 мĕшĕсенче çитетпĕр.

(ТАСС).

Стрелочник Калинко йулташăн паттăр ĕçĕ

Дарница станцинчи аслă стрелочник Калинко йулташ çак иртнĕ кунсенче пысăк авари пуласшине чарнă.

Сортировкă паркĕнче маневр тунă чухне тийенĕ вагонсем пойасран уйăрăлса кайнă. Уйăрăлнă вагонсем пысăк хăвăртлăхпа çаплах малала пынă, вĕсем малти вагонсемпе паровоза хуса çитме çывхарнă.

Çавна Калинко йулташ курнă. Вăл урапа умне хурса вагонсене чармалине пит хăварт илнĕ те, çавна пĕр вагон урапи умне хунă. Вагонсем чарăннă. Анчах стрелочник Калинко йулташ аллине хăвăрт туртса илеймен, унăнне тăвата пӳрнине касса татнă.

Паттăр ĕç тунăшăн Калинко йулташа тав тунă. Ăна укçан преми параççĕ. Çулйĕрсен Халăх Комиссарĕ Бакулин йулташ Калинко йулташа „Почетный железнодорожник" значокĕпе парнеленĕ.

(ТАСС).

ПСК(б)П Шупашкар хула комитет пленумĕ

Йанварĕн 29-мĕшĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Ф. Т. Смирнов йулташа ПСК(б)П хула комитечĕн иккĕмĕш секретарĕнчен хăтарнă. Хула комитечĕн иккĕмĕш секретарне Т. А. Ахазов йулташа, виççĕмĕш секретарне — ку таранччен хула комитет инструкторĕ пулнă М. И. Лапин йулташа суйланă.

Пленум, хула комитечĕн V-мĕш пленумĕ Калинкина йулташа хула комитет пленум тата бӳро членĕнчен кăлармала тунă решенийе пăрахăçа кăларнă.

Совет çĕршывĕ тăрăх

✪ Йанварĕн 27-мĕшĕнче Мускавра тĕнчере чи пысăк çурт пулакан Советсен Дворецĕн никĕсне туса çитерне. Двореца купалакансем тимĕр-бетонлă балкăсене бетонлама тытăнаççĕ, вăл балкăсем çинче ултă метрлă пит пысăк хурçă никĕссем тăраççĕ, вăл никĕссем йатарласа хатĕрленĕ пысăк пахалăхлă хурçă колоннăсем ваљљи пулаççĕ.

✪ Советăн натураљнăй каучук промышленнăçĕ çулран çул ытларах та ытларах ӳссе сарăлса пырат. 1938 çулта кок-сагызран (каучук паракан ӳсен-тăран) каучук тăвасси иртнĕ çулхинчен виçĕ хут çурă ӳсмеле. Çĕршыв малтанхи хут натураљнăй каучукăн пысăк партийĕсене илет. „Каучуконос" — тресĕ опытлă заводсем выранне кок-сагызран каучук тăвакан пысăк завод тăват.

✪ Узбекистанри çĕр мамăкĕ акса тăвакан чи пысăк „Пахта-Арал" совхоз хирĕсенче çурхи суха сухалама пуçланă. Кăнтăрла температурă 10 градус таран йăпă тăрат.

✪ Мускав облаçĕнчи Подољскри механически завод çăмăллатнă çĕнĕ мотоциклсен опытлă партине туса кăларнă. Машинă йăвăрĕшĕ 70 килограм. Пройектлă хăвăртлăх — пĕр сехетре 60—70 километр.

Тракторсене йусасси

Йанварĕн 25-мĕшне Совет Сойузĕнчи машинă-тракторлă станцисенче 111.933 трактор йусанă, плана 45 процент тултарнă. Иртнĕ çул ку вăхăта плана 55 процент тултарнă пулнă. Йулашки пилĕккунлăх хушшинче тракторсене йусас хăвăртлăх чакнине паллă тумала. Çапла, йанварĕн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинче 15.455 трактор йусанă, отчотлă пилĕккунлăхра вĕсене 12.218 çеç йусаса кăларнă.

(ТАСС).

Чернорубашечниксене Абиççинине йани

Йанварĕн 28-мĕшĕнче Неапољрен „Сардиния" пароход çине лартса чернорубашечниксен виçĕ батаљйонне (2.700 çын) Абиççинине йанă. Чернорубашечниксен хисепĕ, Абиççинине малтан, йулашки кунсенче йанипе пĕрле, 70.000 çынран та иртет. Италин пысăк çар чаçĕсене йани Абиççинире çапăçусем самайах вăйли çинчен, вăл çапăçусене итаљйанецсен ирĕксĕрех туса пымали çинчен калаççĕ.

(ТАСС).

Хĕлле тумали ĕçсене манмала мар

(Йалкорсен çырăвĕсем тăрăх)

Малта пыракан колхозсем ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулхи çуракине хатĕрленесси çинчен“ йышăннă постановлени çинчен тĕплĕн сутсе-йавнă хыççăн, кăçал кирек мĕнле çанталăк пулсан та, ниçхăçан пулман вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме тытăнчĕç.

Шăхасан районĕнчи Шĕкĕр йалсоветĕнчи „Çĕнĕ çул“ колхоз колхозникĕсем чăп-чăнах вăйлă тырпул туса илессишĕн бригадăпа бригадă, колхозникпа колхозник хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йанă.

Колхозăн çураки планĕ тăрăх, уйа 1500 лав торф кăлармала пулнă. Социалисăмла ăмăртса ĕçлесе вĕсем пайанхи куна 2200 лав торф, 1500 лав тислĕк кăларса купаласа лартнă. 150 гектар çинче йур тытнă.

Çуракине хатĕрленессине 4-мĕш бригадă (бригадир Порфирйев) малта пырат. Вăл хăйĕн бригадипе 570 лав торф, 515 лав тислĕк уйа кăларнă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 35 центнер, 40 центнер фекали, 12 центнер кĕл пухнă, фосфорит çăнăхĕ 2 тоннă хатĕрленĕ, 40 гектар çинче йур тытнă.

Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленессине районра чи малти вырăна тухнă. Кунта пайанхи куна вăрлăхсене тасатса çитернĕ, йалхуçалăх машинисене те пĕтĕмпех йусаса тирпейлесе лартнă, тислĕк, торф кăларас плана ытлашшипех тултарнă, начар лашасене вăйлă апат çине тăратнă, колхозниксене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетсе тухнă. Халĕ колхозра 240 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкне çура тухсан йраш калчине тăпĕ майлă апат пама вĕтетсе хунă.

Елĕк районĕнчи Васкассинчи Илйич йачĕпе тăракан колхозпа Писĕпри „Рой“ колхозсем кăçалхи большевикла çуракине хатĕрленессине социалисăмла ăмăрту договорĕ тунă. Вĕсем гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кайа мар, рекордлă участоксенчен 160 пăт тĕштырă, 1 пин пăт çĕрулми, сĕт-кантăр 30 центнер туса илме обйазателстве панă.

Ку колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçсене февралĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕмпех туса пĕтерме палăртнă, çав майпа çуракине хатĕрленес ĕçе анлăн сарса йанă.

Çуракине Çатракассинчи Ворошилов йачĕпе тăракан (Тутаркас р.), Елĕк районĕнчи „Красноармейец“, „Хĕрлĕ“ Чутай районĕнчи „Мотор“, Петĕрне районĕнчи „Пионер“ колхозсем те пысăк хастарлăхпа хатĕрленеççĕ. „Пионер“ колхозри Кольцов Ф. колхозник пĕччен 120 пăт кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 85 пăт, 75 пăт фекали пухнă. Вăл халĕ вăйлă тырпул туса илессине опыт тума хатĕрленет.

Анчах та, çав хушăрах çуракине начар хатĕрленекен колхозсем те сахал мар-ха.

Трак районĕнчи Тĕрер йалсоветне кĕрекен „Пуйга“, „Хĕрлĕ Чăваш“, Спасов йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем çырса пĕлтернĕ тăрăх, ку колхозсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Пайанхи куна çитсе те суртсăр вăрлăхсене суртлипе улăштарман, торф кăларман, кĕл, фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухман, йалхуçалăх машинисем кĕркунне лартнă вырăнтах лараççĕ. Вăрлăхсене суртласа çитермен.

Çавнашкалах Çĕрпÿ районĕнчи „Пучах“ Петĕрне районĕнчи „Правда“, „Красный пахарь“. Киров тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсем, Пелчĕк районĕнчи „Социализм“, Трак районĕнчи „Большевик“ колхозсенче çуракине хатĕрленессине ÿрĕк-çÿрĕк ĕçлеççĕ. Çак асăннă колхозсенче иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнине лăпланса ларнă.

Райçĕрĕç пайĕсемпе йалсоветсем ĕçлемеснине Елĕк районĕнчи Крымсарайкă, Писĕп, Паргуцкă, Трак районĕнчи Уçек тата ытти йалсоветсенчи йединоличниксем çуракине хатĕрленес ĕçе пачах тытăнман. Йалсовечĕсем йединоличниксене çураки планне килĕрен çитерсе паман. Уйа тислĕк, торф кăларассине никам та шарламаст.

Вăйлă тырпул туса илесси вăл — çуракине лайăх хатĕрленнинчен, суртлă вăрлăхсемпе акнинчен, агротехникăлă ĕçсемпе тулли усă курнинчен, ударлă тата стахановла ĕçленинчен килет. Çакна райçĕрĕç пайĕсемпе йалсоветсен, колхоз руководителĕсен манмала мар.

Вăрлăхсене суртламан, плугсем тутăхса лараççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Çуракине хатĕрленес ĕç районра питех те çителĕксĕр пырат. Вăрлăх хатĕрлесе тасатса хурас, ахаль вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас, йалхуçалăх машинисене йусас ĕçсем уйрăмăнах йулса пыраççĕ. Аслă Ăстакассинчи Турханкассинчи тата Карабашри колхозсенче ку тарана çитсе те акмалли тата улăштармалли тырăсене суртлама тытăнман. Ку колхозсенче йалхуçалăх машинсене йусас, çĕре çемĕçетермели йапаласене пухас ĕçсем те вăраххăн пыраççĕ. Çавăн пекех Алмандейеври тата Кив Кукашнери колхозенче те плугсем тимĕрçĕ лаççи умĕнчех тутăхса лараççĕ

Колхозсен çуракине пурĕ 150 000 лав тислĕк, 40.000 тоннă торф кăлармала, 1000 центнер кайăк кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемеле. Ку шутран халĕ 27.989 лав тислĕк тата 3792 тоннă кăна торф кăларнă. 104 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 309 центнер фекали пухса хатĕрленĕ.

Уйра йур тытнă вырăнсенче тырпул лайăх пулни пуринĕн те паллă. Анчах нумай колхозсенче кун çинчен нимĕн те шутламаççĕ.

Вăрман Кăршкари „Боевик“ колхозра лашасене вăхăтра апатласа шăвармаççĕ. Наратчаккинчи „Хĕрлĕ Сормово“ колхозра та лашасене начар пăхаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç çавăн пек кайа йулни çĕрĕç пайĕпе колхоз руководителĕсем йапăх ĕçленинчен тата партипе совет организацийĕсем ку ĕçре çителĕклĕ йертсе пыманнинчен килет. Çĕрĕç пайĕн оперативлă йертсе пырассине вăйлатмала.

И. Данилов.

Колхоза кĕреççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхоза кĕме çак кунсенче 3 йединоличник зайавленисем пачĕç.

А. Соловйов.

Оперативлă йертсе пыни çук

ТĂВАЙ, йанварĕн 28-мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр.). ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата ЧАССР. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пыни çинчен тĕплĕн кăтартса пачĕç. Çакăнтан Тăвай районĕнчи пуçлăхсем тивĕçлĕ вывăд туман. Район вăрлăх хывмалли плана халь те тултарман. Хура тул, урпа, çурхи тулă тата ытти перчĕлĕ культурăсене хывассипе чăтма çук кайа йулса пырат. Суртлă вăрлăха пĕтĕмпе те 10,8 процент çеç улăштарнă. Çавнашкалах пĕтĕм вăрлăхран 45 процентне кăна суртланă.

Районра мĕн пурĕ 8054 плуг, 116 сейалкă йусамалă пулнă пулсан, пайанхи куна 552 плуг, 104 сейалкă çеç йусанă.

Агротехникăла ĕçсенсе те тивĕçлĕ вырăна лартман. Уйа тислĕк кăларас плана 27 процент, торф хатĕрлессине—11 процент, пăве йушкăнĕ—19,9 процент, кĕл—26 8 процент кăна тултарнă. Минераллă çăнăхсене кÿрсе килмели плана 77 процент çеç тултарнă.

Çапла пулсан та, райçĕрĕç пай пуçлăхĕ Козлов йулташпа, аслă агроном Йефимов кабинетра сведенисем кĕтсе, циркулярсем çырса çеç лараççĕ. Кунти ытти работниксем те колхозсене тухса пулăшусем памаççĕ.

Йантăрчри „Çулăм“, Тĕмерти Смидович йачĕпе тăракан тата Кивĕ Пуйанкассинчи „Социалисăм“ колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе пайанхи куна çитсе те тытăнмалла пĕрех.

Тĕлĕнмеле, райçĕрĕç пайĕпе йунашарах район центрĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра лайăн кунччен те авăн çапса пĕтермен. Кунта та уйа 300 лав тислĕк кăларнисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çак колхозра пĕрре те пулман.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕнчен Тăвай районĕнчи колхозсене суртсăр вăрлăхсене суртлипе улăштарма кăтартусем паман. Çавăнпа та, Тушкилти „Хĕрлĕ çăлтăр“, Йам булатăври „Çăлтăр“ колхозсене суртлă вăрлăх улăштарма пырсан, улăштармасăр таварса йанисем нумай пулнă.

Районра сейалкăсене чылай йусамала, анчах Канашри Сельхозснабженин базинче кирлĕ пайсем çителĕклĕ мар пирки, сейалкăсене йусама тытăнман. Колхоз председателĕсене час-часах улăштараççĕ. Чылай чухне çавăн пиркийех колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç кайа йулса пырат.

Районри партипе комсомол организацийĕсем, çĕрĕç пайĕ тата йалсоветсем çуракине хатĕрленессипе колхозсене пулăшса вĕрентсе пымаççĕ.

А Каховский, И. Мосейев.

Горÿчисене кÿрсе килмен, запаслă пайсем çитмеççĕ

ТРАК, йанварĕн 31-мĕш. (Телефонпа). График тăрăх Трак МТСтанцин йанвар уйăхĕнче 18 трактор йусамала пулнă. Йанварĕн 30-мĕшне 20 трактор йусанă. Анчах машинă-тракторлă станцин çак çитĕнÿпе пĕрлех пит пысăк çитменлĕхсем пур. Сăмахран, çураки ĕçсене иртерме 113 тоннă горÿчи кирлĕ. Пайанхи куна пĕтĕмпе те 23 тоннă çеç кÿрсе килнĕ. 30 трактор плугĕ вырăнне 22 плуг кăна йусанă.

Февралĕн 10-мĕшĕчен татах 20 трактор йусамала. Анчах запаслă пайсем 14 трактор валли çеç çитеççĕ.

МТС руководителĕсем—директорĕ Угольков тата унăн политикă йенĕпе ĕçлекен помошникĕ Галкин йулташсем—çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешмеççĕ. МТМ рабочийĕсем валли кирлĕ условисем туса паман. Мастерской урайне нимĕн те сарман, çавăн пирки рабочисене ĕçлеме йăвăр.

Петров.

Вăтам ремонт хыççăн ЧТЗ трактора тĕрĕслени (Вăрнар МТСтанцинчи тракторсене йусакан 1-мĕш бригадă, бригадирĕ Максимов).

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Комсомолецсем ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ

ВĂРНАР. (хамăр корр.). Комсомолăн чылай пуçламĕш организацийĕсем çитес çуракине хатĕрлесси пысăк та ответлă задачă иккенне ăнланса илсе, хăйсен комсомолецĕсене ответлă ĕçсем панă.

Хурнсурти колхоз çумĕнчи комсомол организацинче кашни комсомолец çуракине хатĕрленес çĕрте пысăк выран йышăнса ĕçлет.

Колхоз председателĕ—комсомолец Кондратйев кăçалхи çуракине кăтартулăн хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн чĕререн тăрăшат. Бригадăпа бригадă, колхозникпе колхозник хушшинчи социалисăмла ăмăртува анлăн сарса йанă. Çапла майпа колхоз пайанхи куна 1554 лав торф, 560 лав тислĕк уйа кăларнă. Вăрлăхсене суртлас ĕçре машинсем хĕрÿлĕн ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне 216 пăт пăрçана колхозниксем пĕрчĕн суртлаççĕ, йалхуçалăх машинисене те çак кунсенчех йусаса петереççĕ.

Иванов Н, Иванов П., Харитонов бригадир-комсомолецсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура Харитонов Василий бригади малта пырат. Вăл уйа 500 лав тислĕк турттарнă.

Комсомолец Иванов Тихон лашасем пăхат. Колхоз лашисене çуракине мăнтăр кăларассишĕн вăл тăрăшса ĕçлет. Лашасене вăхăтра шăварат, тасатат. Комсомолец Крислов Антон избачра ĕçлет. Вăл хăйĕн вулав çуртне çуракине хатĕрленес ĕçре чăн-чăн агитаци центрĕ туса хунă. Колхозниксене партипе правителствă кăларнă постановленисемпе вăхăтра паллаштарат. Çапла майпа çуракине кăтартулăн хатĕрленес ĕçе пĕтĕм колхозниксен массине пĕтĕçтерет.

Комсомолец Владимиров П. писмоносец пулса ĕçлет. Вăл çуракине тухнă тĕлне кашни колхозник килне хаçат журнал çитерессишĕн кĕрешет.

Ытти комсомолецсем те чылайах пысăк вырăн йышăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксен масси хушшинче чăн-чăн организаторсем пулса тăрса çуракине кăтартулăн хатĕрленессишĕн кĕрешеççĕ.

С. Улангай.

Колхозник-стахановецсен районри слйочĕ

Йанварĕн 29-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи колхозник-стахановецсен, ударниксен слйочĕ пулса иртрĕ. Слйота 250 çын пухăнчĕç.

Слйотра пĕр ыйту: 1937 çулхи йалхуçалăх ĕçĕн итогĕсемпе йалхуçалăхĕнчи 1938 çулхи задачăсем çинчен сÿтсе-йаврĕç. Вăл ыйтупа ПСК(б)П Тăвай райком секретарĕ Йарандайкин йулташ доклад туса пачĕ.

Иртнĕ çулта район йалхуçалăх техникине алла çавăрса илсе агротехникăлă ĕçсене лайăх туса пынине кура, ыраш гектартан, вăтам шутпа 18 центнер туса илчĕ.

Уйхир ĕçĕнче нумай стахановецсем палăрчĕç.

Кадрсем йенчен апла мар. Иртнĕ çулта колхоз председателĕсене час-часах улăштарса тăнă. Хăшпĕр колхозсенче пĕр çул хушшинче бригадирсене 3—4 хут улăштарнă.

Пренире 18 çын тухса каласрĕç. Йĕнших Нăрвашри Т. В. Василйев пахчаçă колхозри сат-пахча ĕçĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласрĕ. Унăн бригадинче 25 çын ĕçлет. Кашни пĕрпĕринпе ăмăртат. Колхоз сат-пахчаран пысăк тупăш илет. 1931 çулта пахча тупăшĕ 300 тенкĕ пулнă пулсан, 1936 çулта 12000 тенкĕ, 1937 çулта 22000 тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçал сахалтан та 40000 тенкĕ тупăш илме обйазателствă пачĕ.

Пренире тухса калаçакансем пурте мĕнле майпа ĕçлесе ытларах тупăш илесси çинчен чарăнса тăчĕç.

Унтан райĕçтăвком секретарĕ Сергейев йулташ парти райкомĕпе райĕçтăвком президиумĕ иртнĕ йалхуçалăх çулĕнче вăйлă тырпул туса илнĕ колхозсене, уйрăм стахановецсене районри хисеп хăми çине кĕртесси çинчен йышăннă постановление вуласа пачĕ. Вăл постановлени тăрăх, икĕ колхоза, бригадирсене, звеноводсене, полевод-опытниксене, опытник-пахчаçăсене, тракторис-стахановецсене, машиноведсене тата фермăсенче ĕçлекен уйрăм стахановецсене, пĕтĕмпе 23 çын, районри хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Слйот 1938 çулти йалхуçалăх ĕçĕсене ăнаçлăн туса пыма тата гектартан вăтам шутпа 120 пăт тĕштырă туса илме Вăрмар районне социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕ. „Чăваш Коммунĕ“ тата „Красная Чувашия“ хаçатсене ăмăрту арбитрĕ пулма ыйтрĕç.

Агрокружок организацилемен

Патрекел йалсоветне кĕрекен Елексей-Тимешĕнчи „Хĕрлĕ Тимĕш“ колхоз (Йелчĕк р.) кăçалхи çуракине хатĕрленессипе пачах çителĕксĕр ĕçлет. Вăрлăхсене пайанкуна та суртламан, çуракинче ĕçлемели машинăсене: плуг, çейăлкă, сÿресене йусама пуçламан. Çĕре çемçетме план тăрăх 94 центнер кĕл, 600 центнер торф, 22 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлемеле, 7200 лав уйа тислĕк кăлармала пулнă, вĕсем пурĕ те 40 лав çеç уйа тислĕк кăларнă, 3—4 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ. „Кăçал хире ахаль те йур тултарат“ тесе, йур тытасси çинчен асăнмаççĕ те.

Колхозниксене агротохникăна вĕрентессине организацилемен.

Гер. Иванов.

Йалсовет работникĕсен курсĕ

ТАВАЙ (хамăр корр). Йалсовет аппаратĕнче ĕçлекен работниксен квалификацийĕсене хăпартас тĕлĕшпе райĕçтăвком йанварĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа курс иртерет.

Курсра тĕнчери лару-тăру, совет строителствипе революцилĕ саккунлăх, агротехникă ыйтувĕсем тăрăх лекцисем пулаççĕ. Курсран 40 çынна вĕрентсе кăлармала.

Райсойузсем тăвас пирки

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1935 ç. çентаберĕн 29-мĕшĕнче йалти потребкоопераци çинчен постановлени йышăннăранпа икĕ çул иртрĕ. Чăваш республикинчи потребител кооперацине финанс йенĕпе государствă тăтăшах пулăшса пынă май, потребкоопераци чылай пысăк çитенÿсем тума пултарчĕ. 1935 çулта таварçаврăнăшĕ 81 мĕлйун тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1937 çулта 135 мĕлйун тенке çитрĕ. 1938 çулта таварçаврăнăш планне 165 мĕлйун тенкĕлĕх палăртнă. Çĕнĕрен 50 йалта магазинсем уçнă. Район центрĕсенче 11 магазин тунă. Кунсăр пуçне халиччен ĕçлекен магазинсене нумай аслăлатнă, кÿрсе килекен тĕрлĕ таварсен йышĕ ÿснĕ, т. ыт. те. 1935 çулта потребкоопераци убыткă тÿснĕ пулсан, 1936 çулта 2177 пин тенкĕ тупăш илнĕ. 1937 çулта та чылай тупăш пулнă.

Çитĕнÿсем пур пулсан та, пирĕн республикăри потребкоопераци халăх хуçалăхĕн пĕтĕм ÿсĕмĕнчен кайа йулса пырат. Потребкоопераци тавар илекенсем ыйтакан куллен кирлĕ таварсене пурне те çителĕклĕ таранах сутăймаст-ха. Чăвашсойуз хăйĕн хальхи вăхăтра организацилĕ системипе халиччен тунă çитĕнÿсене те çирĕплетсе хăварма пултараймарĕ. Чăвашсойуз системинче пысăк çитменлĕхсем пур. Куллен кирлĕ таварсем—сахăр, тăвар, спичкă, супăнь, махоркă т. ыт. те сутас ĕçе ку тариччен те кирлĕ пек йĕркелесе çитермен. Растратăсем пĕтмен. Чăвашсойуз системинче растратă 1155 пин тенкĕ таран шут ланат. Кадрсем улшăнсах тăраççĕ, вĕсен ретне тăшманла, йурăхсăр çынсенчен тасатса çитермен. Чăвашсойуз вырăнти кооперативсенчен уйăрăлса кайнă, вĕсене куллентех пулăшса, йертсе пыраймаст.

Чăвашсойузăн районри инструкторĕсем, кооперацин вырăнти организацийĕсене начар пулăшаççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1935 ç. çентаберĕн 29-мĕшĕнче „Йалти потребкоопераци ĕçĕ çинчен“ йышăннă постановленийĕнчен потребкоопераци ĕçне лайăхлатас, райсойузсене çирĕплетес задачă тухса тăнă. Унта çапла каланă: „Тĕпсойуза висĕ уйăх хушшинче нумай мар районлă округсем, нацилĕ облаçсемпе республикăсемсĕр пуçне (Çурçĕр Кавказри автономлă облаçсем, т. ыт. те), пур çĕнĕ районсенче те райсойузсем тума хушас“,—тенĕ.

Халăх тăшманĕсем Зеленский, Майоров, т. ыт. те çак постановленине пăхăнман, ăна пăсса пынă. Вĕсем чылай пысăк облаçсемпе республикăсенче потребкооперацин районри сойузсене пĕтерсе хунă. Чăваш республикине те çав шутах кĕртнĕ, пирĕн республикăра та райсойузсене пĕтернĕ пулнă. Тĕпсойузăн çак тăшманлă сĕнĕвне Чăваш республикĕнчи партипе советăн кивĕ руководстви пурнăçланă. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1935 ç. çентаберĕн 29 мĕшĕнче йышăннă постановленинче кăтартса панă пек суту-илÿ ĕçне вăйлатса пырас вырăнне, вĕсем потребкооперацин районри сойузĕсене пĕтернипе, суту-илÿ ĕçне вăйсăрлатса пынă. Хăшпĕр йалпосем пĕтсе ларчĕç, растратăсем ÿссе пычĕç. Райсойузсене пĕтерсе лартнă пирки, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем районри суту-илÿ ĕçне çителĕклĕн йертсе пырайман.

Çавăнпа та Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обком бÿровĕ 1937 ç. декаберĕн 19-мĕшĕнче пур районсенче те райпотребсойузсем тума йышăнчĕ. Чăвашсойузăн районри хатĕрлев кантурĕсем райсойузсен аллине куçаççĕ. Райсойузсен аппаратĕнче, районри хатĕрлев кантурĕпе пĕрле шутласан, 12—16 çын пулмала. Хальхи вăхăтра кашни районтах Оргбÿро тăваççĕ, унта 3—5 çын пулат. Оргбÿро райсойуз организацилес тĕлĕшпе ĕçлет (райсойуз аппаратĕнче ĕçлеме çынсем тупат, районри сйеса иртерет, т. ыт. те.) Районри сйесра райсойуз правленине суйламала. Райсойуз правленине суйлаччен унăн ĕçне Оргбÿро туса пырат. Канаш районĕсĕр пуçне, пур районсенче те йалпосене таварсем ушкăнпа парса тăрас ĕçе райсойузсен аллине памала тунă.

Райсойузсен мĕнле ĕçлесе пымалине, вĕсен вырăнĕ мĕнле пулмалине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1935 ç. çентаберĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановленинче пит те аван кăтартса панă. Оргбÿросен райпотребсойузсем тунă чухне çак постановленине пăхăнса ĕçлес пулат.

Райпотребсойузсем (Оргбÿросем) умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи малтан, йалпосен отчотпа суйлав кампанине иртермеле. Кооперацине йертсе пырас ĕçе тĕрĕс, тÿрĕ ĕçлекен çынсене, суту-илÿ ĕçĕнчи отличниксене, партипе правителствă ĕçне чĕререн йуратса туса пыракан çынсене лартмала. Суту-илÿ ĕçĕнчен сăтăрçăсене, жуликсене, иртен-çÿренсене тасатса пырас пулат. Хуçасăрлăхпа кĕрешмеле.

Оргбÿросен йалпосене таварсем, уйрăмăнах куллен кирлĕ таварсем кÿрсе тăрас ĕçе йĕркелесе йамала. Суту-илÿ йенĕпе йулса пыракан йалпосен, сăмахран, Алгазино, Уравăш, Пăлапуç. Пашйел, Кармаш, Тивĕш, Катраç, Туçи, Чăваш Сăкăт т. ыт. йалпосен ĕçне йусамала. Ку йалпосене економикă, хуçалăх йенчен тĕреклетме чылай укçа-тенкĕ уйăрса памала тунă. Ку йалпосен аппарачĕсене шанчăклă çынсем тупса лартас пулат, вĕсене малти рете тухма пулăшас пулат.

Райсойузсен пур çĕрте те таварсене ушкăнпа сутас ĕçе хăвăрт йĕркелемеле. Таварсем хума складсем, инвентарсем халех хатĕрлемеле. Çитес кĕске вăхăтрах Тĕпсойуз райсойузсене складсем, кантурсем, хватерсем т. ыт. кирлĕ çурт-йĕрсем тума укçа парас ыйтăва татса парат. Районри организацисен çак ĕçре Оргбÿросене тивĕçлипе пулăшмала.

1938 çулти таварçаврăнăш планĕ пысăк. Çавăнпа та таварсене вăккăн сутас ĕçе анлăн сармала. Суту-илÿ ĕçĕнче стахановла йухăма вăйлатса пырса, тавар çаврăнăш планне ытлашшипех тултармала. Оргбÿросен кашни йалповăн, хулари потребител кооперацин тавар çаврăнăш планне тепĕр хут пăхса тухмала. Тавар çаврăнăш çулталăк планне 1938 ç. декаберĕн 12-мĕш тĕлне тултармала тăвас пулат. Суту-илÿ ĕçне аван йĕркелес пулат. Хулара та, йалта та тавар илекен çынсем—рабочисем, служащисем, колхозниксем кашни йалпо, магазин, кашни продавец вĕсемшĕн тăрăшнине курчăр, сисчĕр. Çак кунсенчех çураки вăхăтĕнче суту-илÿ ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе хатĕрленме тытăнас пулат.

Чылай магазинсенче, лавкасенче ним типтерлĕх çук. Таса мар, таварсене йĕркелĕ хуман, т. ыт. те. Çак çитменлĕхе пирĕн хăвăрт пĕтермеле. Магазинсене, лавкасене илемлетме, типтерлĕх кĕртме укçа-тенкĕ ытлăн-çитлĕнех уйăраççĕ, анчах нумай çĕрте вăл укçа-тенкĕпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. 1937 çулта лавкасене йусама, илемлетме уйăрнă укçа-тенкĕрен 50 процент çеç усă курнă. Магазинсене йусас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннине хирĕç хыт ă кĕрешмеле. Лавкасем таса, çутă, ăшă пулччăр.

Райсойузсен малтанхи кунсенчех йалпосенче растратăсем тунине хирĕç кĕрешĕве тухмала. Йалпосен ревизи комиссисен ĕçне вăйлатас пулат. Кашни райсойузăнах инструктор пулат. Райсойуз инструкторĕсен чи малтан çак сийенлĕхпе кĕрешмеле, йалпосенче суту-илÿ ĕçне лайăх йĕркелеме пулăшмала.

Суту-илÿ организацисенчи хăшпĕр çынсен: райсойузсем тума кирлĕ мар, текен шухăш пур. Райсойузсем туни усăсăр, ытлашши тăкак кăларат, тесе калаçаççĕ вĕсем. Ку шухăш тĕрĕс мар, вăл—сийенлĕ шухăш. Райсойузсем туни йертсе пырас ĕçе йалпосем патне çывхартнине пĕлтерет. Райсойузсем йалпосен укçипе мар, хăйсем (районри магазинсем урлă) суту-илÿ туса тупнă тупăшсемпе ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1937 ç. декаберĕн 19-мĕшĕнче „Райпотребсойузсем организацилесси çинчен“ йышăннă постановлени пирки пайщиксем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса парас пулат. Ĕçсыннисене потребкооперацин ĕçне çине тăрсах вăйлатас, суту-илÿ организацисенчи сăтăрçăсен ĕçĕн йулашкийĕсене пĕтерес ĕçе анлăн хутшăнтарасси — пайанхи пысăк задачă. Районри партипе совет организацисен кооперативсене йурăхсăр, тăшманла çынсенчен тасатса пымала, йалпосене тÿрĕ ĕçлекен шанчăклă çынсене, йалта культурăлă суту-илÿ йĕркелеме пултаракан çынсене лартмала.

Л. С. Чернов.

Комсомолецсем ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн решенине вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. Йанварĕн 25-мĕшĕнче комсомол активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцисем çине формаллă-бюрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн Пленумĕ йышăннă постановленине сÿтсе йаврĕç.

Комсомол райкомĕ жалабăсемпе çырусене мĕнле пăхса тухни çинчен райкомол секретарĕ М. П. Пушкин йулташ доклад турĕ. Иртнĕ çулта ПСÇЛКС райкомне пурĕ 44 жалабăсемпе çырусем пырса кĕнĕ. 1937 çулта мĕн пурĕ те 11 жалабă çеç пăхса тухнă. 13 жалабăна кăçал пăхса тухнă. 20 жалабăна халичченех пăхса тухман-ха.

Райкомол секретарĕ Пушкин йулташ жалабăсен содержанийĕсене, жалабăсем кам çинчен çырнă тата жалабăсене мĕнле çынсем çырнине тĕплĕн пĕлмест.

Пухура пурĕ 14 комсомолец тухса каларĕç. Тухса калакан йулташсем пурте жалабăсемпе çырусене вăхăтра пăхса тухманни çинчен кăтартса пачĕç. Райкомол çамрăксем комсомола илме ыйтса пана зайавленисене вăхăтра пăхса тухмаст. Чылай çамрăксен зайавленийĕсем ик-виç уйăх выртнисем те пулнă.

ПСК(б) Парти Тĕпком Пленумĕн постановленине сÿтсе йавнă хыççăн пуху çапла каларе: комсомолтан кăларас тĕлĕшпе Ишлей райкомолĕ те чылай йăнăшсем турĕ. Д. Михайлов, В. Николайев, В. Никитин В. Гуськов йулташсене ĕçе тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех райкомол пленумĕн членĕнчен кăларнă.

Çавнашкалах Ишлейри вăтам шкулта вĕренекен Мушлайевăн ĕçне тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех комсомол комитет секретарĕнчен кăларнă. Тĕрĕслесе пăхсан, Мушлайев йулташа комсомол комитет секретарĕнчен кăларни тĕрĕс пулманни курăннă.

Çав хушăрах клас тăшманĕсемпе кĕрешмелле тесе çиелтен кăшкăракан, лайăх ĕçлекен комсомолецсене айăпласа тăрăшакан карьерис комсомолецсене тăрă шыв çине кăларса пыман. Акă самахран Филиповна, Герасимов комсомолецсем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене, лайăх ĕçлекен комсомолецсем çине йăвантарма пăхнă. Анчах комсомол райкомолĕ вĕсен ирсĕр ĕçĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларман.

Районри комсомол активĕн пухăвĕ ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн решенине ырларĕ. Комсомол организацисенче, тата колхозниксем хушшинче пленум решенине вĕренсе тивĕçлĕ выводсем тумада, тесе йышăнса хăварчĕ.

Парти активĕн пухăвĕ

Йанварĕн 26-мĕшĕнче Вăрнар райпартактивĕн пухăвĕ пулчĕ. Пуху партин Тĕпком пленумĕ „парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцисем çине формаллă-бюрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхĕсене пĕтермели майсем çинчен" йышăннă постановленине сÿтсе-йаврĕ.

Парти активĕ халь Тĕпком решенийĕсене ăнлантарма йалсене тухса карĕ. Пуçламĕш парторганизацисенче Тĕпком решенийĕсене сÿтсе-йавса вĕренес ĕçе тытăннă.

Д. Обофоров.

ПАРТОРГ

Колхоз правленине пĕр карчăк кĕчĕ. Вăл йеринпен утса счетовод патне пычĕ те каласма пуçларĕ:

— Есĕ мана ыран валли сведени хатĕрле. Миçе лав тислĕк, торф тăкнине, миçе центнер кĕл пухнине, вăрлăх мĕн чухлĕ тасатнине, машинисем йусанине — пурне те çыр,—терĕ.

— Йурать, Семенова йулташ, хатĕрлĕп,—ответлерĕ счетовод.

— Ирхине 8 сехет валли хатĕрле, ытти колхозниксенчен илĕ епĕ... Манăн ыран пленума каймала,—терĕ те пăрăнса карĕ шалтутри çыхнă кĕрĕк тăхăннă карчăк.

Ăна хирĕçех пĕр çамрăк çын чупса кĕчĕ:

— Семенова йулташ, пайан пуху тăвас тетĕп. Мĕн шутлатăн. Вăхăт пулать-и? Пайан комсомолецсем пурте килĕç те...

— Йурать. Кăшт кансан пыратăп, ывăнтăм-ха. Унччен те пулмарĕ Семенова йулташа телефон патне чĕнеççĕ. Йалсовет канцелярийĕнчен ыйтаççĕ.

— Йурать. Укçа вăл хăй тĕллĕн пухăнмасть. Инспектор пухать—сирĕн ăнлантарас пулать. Пыратăп...—йалсовет уполномоченнăйĕне каласрĕ пулмала.

Анчах кам вăл Семенова? Пĕрре курçине ăна ытти карчăксенчен нимĕпле те уйăрма çук. Анчах йалта пур ыйтупа та уи шухăшне, канашне ыйтса пĕлеççĕ. Пурте: „шухăшлать, васкамасть, ĕçе тĕрĕс тăвать",—теççĕ. Семенова халăх шанать. Çав халăх шанăçĕ, халăх йурани хавасланатарать ăна.

Семенова йулташ 1924 çулта ПСК(б)П членĕ. Вăл йалти коммунистка. Икĕ çултанпа парторг пулса ĕçлет. Кăçал тата йалсовет председателĕ те.

Вăл вăтă шулин те пурнăçпа шай пырать. Хаçатсем вулать, парти пухăвĕсенче докладсем тăвать. Колхоза кайса пулăшать.

— Тÿрех калатăп: ватăлтăм вăй çук, куç начар курать. Хаçатсенчи пысăкрах статйасене, постановленисене комсомолецсем вуласа пăраççĕ. 58 çула çитрăм ĕнтĕ. Час-часах чирлетĕп. Çапах та чун чăтмасть—кăшт самайлансанах ĕçлеме тытăнатăп. Ĕç хăй вăй кÿртет. Суйлав вăхăтĕнче участкă комиссе председателĕ пултăм. Суйлава аван ирттертĕмĕр. 45 агитатор ĕçлерĕç. Суйлавçăсенчен 98 процентĕ сасăларĕ,—тет Пелагейа Прокопйевна Семенова.

Семенова халăха йуратать. Çавăнпа халăх та ăна йуратать.

С. Карташов.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительстви

Лини хывакан бригадăсем Трак расиесне çитнĕ

Йанварĕн 30-мĕш тĕлне 36,3 километр тăршшĕнĕ лини хывса лини хывакан бригадăсем Трак расиесне çитнĕ. Унсăр пуçне 70 метр тăршĕ линине çирĕплетсе хывма хатĕрлесе хунă. Халĕ Трак расиесĕнче 2-мĕшпе 3-мĕш линийе хывасси пырать.

Çĕр ĕçне тăвасси халĕхи вăхăтра виçĕ участокра: 53—39—40-мĕш километăрсенче пырать. Ку ĕçре Трак, Çĕрпÿ, Ишлей, Елĕк тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозниксем ĕçлеççĕ. Йанварĕн 29-мĕшĕнче строительствăра пурĕ 792 çын тата лашапа ĕçлекенсем 217. Çулçине Трак районĕнчи колхозниксем халĕ те хĕрÿлĕн ĕçлеççĕ. Çав районсенчи колхозниксем ĕçленине йанварĕн 11-мĕшĕнчен 30-мĕшĕ хушшинче 11.450 кубла метр çĕр чавса купаланă. Çав хушăрах „ЛК" екскаватор 2.316 кубла метр çĕр чавса купаланă. Тумалли çĕрĕç хисепĕ кунсеренех сахаланса пырать.

Хĕрлĕ йалавлă участкăра

Лини хывакан бригадăсем çак кунсенчех Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне илнĕ Трак районĕнчи колхозниксем ĕçлекен участкăна—53-мĕш километра çитеççĕ. Бригадăсем çитнĕ тĕлĕ çĕрĕçне туса çитерсе лини хывма çул уçса парассишĕн колхозниксем пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Вĕсем йанварĕн 25-мĕшĕнче, хĕрлĕ йалава илнĕ чухне, хăйсем: епĕр строителствăра çĕрĕçне пĕтеричченех ĕçлетпĕр, хĕрлĕ йалава аларан вĕçертместпĕр, тенине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Халĕхи вăхăтра колхозниксем хушшинче строителствăна йышлăн ĕçлеме тухасси çеç мар, ĕç пахалăхне аванлатассишĕн тата тухăçлă ĕçлессишĕн те кĕрешÿ вăйлансах пырать. Пур ĕçсене те социалисăмла ăмăртува никĕсе хурса тăвасси вăйлăн саралать. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ куллен ÿсет. Йанварĕн 20-мĕшĕнче вăтамран кашни çын пуçне 0,7 кубла метр, кашни лаша пуçне 2,33 кубла метр тăпра чавса купаланă. Йанварĕн 26-мĕшĕнче çын пуçне 1,37 кубла метр, лаша пуçне 4,68 кубла метр, 27-мĕшĕнче çын пуçне 2,06 кубла метр, лаша пуçне 5,12 кубла метр чавса купаланă. Чылай бригадăсенче çын пуçне сменăра 4—4,5 кубла метр чавса купалаççĕ.

Малта пыракан колхозсем хăйсен обйазателствисене пурнăçа кĕртнĕ хыççăн та чукунçул строителствинчен каймаççĕ. Димитров йачĕпе тăракан колхоз плана 200 процент ытла тултарнă. Вăл колхозран халĕ те строителствăра çуранисем 60 çын, лашалисем 15 çын ĕçлеççĕ. „Новый мир" колхоз колхозникĕсем те çавнашкалах ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсен опычĕсемпе усă курса лайăх ĕçлеме тытăнакан колхозсен, бригадăсен хисепĕ ÿссех пырать. Лайăх ĕçлекенсен ĕретĕнче „Çĕнĕ ĕç". (правлени председателĕ Матвейев), „Бускир" (бригадир Петров), „Прогресс" (бригадир Григорйев) колхозсем тăраççĕ. Вĕсем хăйсен планне тултарнă хыççăн та строителствăрах ĕçлеме йулчĕç.

Строителствăра пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозницăсен хисепĕ кунсерен ÿссе пырать. „Волга" колхоз колхозницисем И. Лапшина, В. Архипова арçынсемпе пĕртан тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Закамский.

Йалава вĕçертместпĕр

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Трак районĕнчи колхозниксене чукунçул ĕçĕнче лайăх ĕçленĕшĕн хĕрлĕ йалав памала тунă. Кун пирки йатарласа кăларнă постановленине Трак районĕнчи колхозниксем пысăк хаваслăхпа йышăннă. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ тата çÿле хăпарчĕ.

Йанварĕн 27-мĕшĕнче „Правда" колхозран 19 çын 5 лашапа чукунçул тунă çĕрте ĕçлерĕç. Ку колхозран ытти кунсенче те 14—19 çын таталмасăр ĕçлет. Колхозниксем хăйсен обйазателствине ытлашшипех тултарассишĕн тăрăшаççĕ.

„Исаково" колхозран та кашни кун ĕçлеме кайаççĕ. Ку колхозри ударницă Йевлампийа Николайева ватă пулин те хăй пуçарса колхозниксене ĕçлеме йертсе тухса кайать.

— Епĕр, хамăра чысласа панă хĕрлĕ йалава хамăр аларан вĕçертмĕпĕр, епĕ ватăлăхра та пулин чукунçул тунă çĕрте ĕçлеме телейлĕ пулнăшăн хĕпĕртетĕп, тет Николайева колхозницă. Ун хыççăн йунашарти „Коммунар" колхозран 21 çын 4 лашапа ĕçлеме кайнă.

Хатайевский.

Лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшатпăр

ТРАК. Мартынкассы йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхоз членĕсем Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче ĕçлеме йанварĕн 25-мĕшĕнче 8 колхозникрен бригадă организилесе тухрĕç Халĕ колхозниксем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура уйрăмăнах К. Степановпа И. Матвейев йулташсем азан тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Йанварĕн 25-мĕшĕнче кашни çын пуçне 6 кубла метр çĕр чавса турттарчĕç.

И. Терентйев.

СТАЛИН ĔМĔРĔ

Йепле телейлĕ пирĕн халăх,
Мĕн пек телейлĕ ачасем.
Чĕресенче тулли хаваслăх,
Епир йурлатпăр йурăсем.

Умра—телейлĕх çулĕ уçă,
Мала чĕнет вăл халăха.
Тăван атте, тăван çулпуçĕ.
Пиллерĕ çак хаваслăха.

Ăна савса епир йурлатпăр,
Саватпăр чаплă ĕмĕре.
Мухтавлă паттăрсем пулатпăр
Ирĕк ĕçре, кĕрешÿре.

Çамрăк ăру татах телейлĕ,
Çуралнă савăнса ÿсме.
Саватă пире телей хĕвелĕ,
Пире çул ирĕк вĕренме.

Йепле телейлĕ пирĕн халăх,
Мĕн пек телейлĕ ачасем!
Чĕресенче тулли хаваслăх,
Епир йулатпăр йурăсем.

Шкул ачи Е. Илларионов.

Йурă

Пирĕн пурăнăç илемлĕн,
Хÿхĕм сат пек йешерет.
Ма тесессĕн, Аслă Сталин
Çак сата хăй ÿстерет.

Хумлăн-хумлăн йухтăр йурă,
Çиттĕр йура пур тĕле.
Çĕнтерÿлĕн çиттĕр йурă
Пирĕн аслă Кремĕле.

Пур çĕре те çул халь уçă
Вĕренме, канма ĕçе...
Сывăх тусăмăр-çулпуçĕ
Пачĕ çакă тивĕçе.

Йанăратăр йурă уççăн,
Вĕçсе çиттĕр пур тĕле.
Илттĕр тусăмăр-çулпуçĕ,
Çиттĕр йурă Кремĕле.

Ĕмĕтсенĕн ĕмĕррийĕ
Çитрĕ пирĕн кунçулра,
Сталин—пурăнăç хĕвелĕ,
Сталин—пирĕншĕн йалав.

В. Ваçкин.

ТРАКРИ ВĂТАМ ШКУЛТА

Шкулта мĕн пурĕ 500 ача вĕренет. Шкулти кашни клас ăмăртува хутшăннă. Классенче ăмăрту договорне мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ хыççăн, 8-мĕш „Б" клас малта пыни курăнчĕ. Ку класри кашни ача „хорошо" паллăран кайа мар отметкăсем илнĕ. Ака, Г. Иванов, Н. Кустарников, А. Дементйев, А. Трофимова йулташсем „отлично" паллăсемпе çеç вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем вĕренÿре йулса пыракансене пулăшаççĕ, уроксенче учителсем каланисене тимлĕн итлесе лараççĕ, ăнланман ыйтусене çийĕнчех ыйтса пĕлеççĕ, киле парса йана уроксене лайăх хатĕрлеççĕ. Шкул библиотекинчĕн илемлĕ литературăсем илсе вулаççĕ. Библиотекăра 4 пине йахăн кĕнеке пур. Учителсем те уроксене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ.

Ăмăртура 8-мĕш „А" клас кайа йулса пырать. Вăл ачасем хушшинчи дисциплипăна йапăхтарнинчен килет. Ку класра вĕренекен Федотовпа Йефимов комсомолецсем вĕренÿре йаланах йулса пыраççĕ, дисциплинăна пăсаççĕ.

Вăхăта усăлă ирттерме шкулĕн радио, шашкă-шахмăт, домино, билиард, гитарă, мандолинă, балалайкă пур. Шкул 30 мăшăр йĕлтĕр илчĕ. Халĕ вĕренекенсем йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне туса ирттерме хатĕрленеççĕ.

Шкулта „Большевикла вĕренÿшĕн" тата „Хатĕр пул" йатлă хаçатсем тухса тăраççĕ. Пионер отрйачĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсене аслă вожатăй Семенова йулташ йертсе пырать. Отрйадсемпе кăçал 8 хут сбор туса ирттернĕ.

Çавăн пекех шкулти драмă, хор, литературă, çамрăк авиомоделиссен кружокĕсем аван ĕçлесе пыраççĕ, 4 политкружоксем. Кружоксенче учител—комсомолецсем вĕрентеççĕ.

Ал. Семенов.

Колхозри хор кружокĕ

Кăшаркассинчи (Çĕрпÿ р.) „Пионер" колхозра хор кружокĕ организацилерĕç. Кружокра 45 çын. Йалти вечăрсенче хор тĕрлĕрен йурăсем йурласа парать.

А. Иванов.

Рабочисем Çеççи материалĕсене вĕренеççĕ

Шупашкарти тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе служăшчисем ССР Сойуз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççи материалĕсене пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ.

Тир-сăран заводĕнче Çеççи материалĕсене вĕренес тĕлĕшпе пур цехсенче калаçусем пулса ирттеççĕ. Калаçусене заводри активлă комсомолецсемпе коммуниссем йертсе пыраççĕ, ку калаçусем кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче 20—30 минут хушши пулса ирттеççĕ. Çавăн пекех ерех заводĕнче те Çеççи ĕçĕсене вĕренес тĕлĕшпе 5 кружок ĕçлет. Ку кружоксене цех начальникĕсем йертсе пыраççĕ.

Суйлавçăсем Совет Сойузĕн правителствине унăн пуçлăхне, Сталин йулташăн чи çывăх сотрудникне—Молотов йулташа хĕрÿлĕн саламлаççĕ.

С. Воробйов.

269,8 тоннă тоннидă кăларнă

Çĕмĕрле. (Телефон тăрăх) „Большевик" завод йанварĕн 26-мĕшне хăйĕн 25 кунхи планне 101,3 процент тултарчĕ. Завод 266,4 тоннă тоннидă туса кăларас вырăнне 269,8 тоннă туса кăларчĕ.

Йанварĕн 24-мĕшĕнче тоннидă туса кăларассипе Стонский йулташ йертсе пыракан III-мĕш бригадă çĕнĕ çитĕнÿ турĕ. Вăл сменăри нормăна 119,9 процент тултарчĕ. Пархисенко коммунист йертсе пыракан бригадă та 26 мĕшĕнче плана 112,4 процент тултарчĕ.

Йулашки вăхăтра уйрăмăнах пушатаканcен бригадинчи Денисов, Глушенков тата Сулимов стахановецсен производствăла хастарлăхĕ ÿсрĕ.

Иваницкий.

Наборшчикрен—типографи директорĕ

Вунçичĕ çулхи Николай Иванов, ултă çул вĕренмели шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, 1932 çулта Çĕрпÿ типографине ĕçлеме кĕнĕ. Малтанах вăл ученик шучĕпе наборшчик пулса ĕçленĕ. Хăйĕн ĕçĕ çине тимлĕн пăхнипе Иванов йулташ, набор техникине хăвăрт хăнăхса çитет, районри „Колхоз çулĕпе" хаçата кăларнă çĕрте ĕçлет, учениксене хăй вĕрентме тытăнать.

Трак райĕçтăвкомĕ Иванов йулташа халь Тракри типографи директорĕ пулма çирĕплетнĕ.

Николай Иванов 1932 çултанпа комсомолта тăрать.

С. Конст.

Ачасен республикăри техникăла конкурсĕ

Социалисăмла çĕршывра техникă тарăнăн йалана кĕрсе пырать. Пирĕн ачасем мĕн пĕчĕкренех тĕрлĕрен машинăсем курса ÿсеççĕ. Ачасем техникăпа мĕнле интересленни вĕсен вăййисенче те лайăх курăнать. Техникă ачасен шухăшĕпе ĕмĕчĕсене çĕклентерет, ăнланăвĕсене сарма пулăшать. Вăйран ачасем ĕçе куçса пыраççĕ. Пайан ача хăй йуратнипе ĕçлесе модел тăвать, ыран çак ачаран стахановец, техник, инженер, изобретател ÿсе çитĕнет. Пайан вăл самолйот моделне тăвать, ыран унран вĕçевçĕ, авио-техник, авио-инженер—конструктор ÿсе çитĕнет. Çаплах ÿсеççĕ ытти чаплă ăстаçăсем те: каран тăвакансем, станок тăвакансем, архитекторсем.

Ача техникăна йуратни ăна наукăсен никĕсне çавăрса илме, ăслăлăха, уйрăмах физикăна, тĕплĕнрех вĕренме, ĕçе хăнăхма пулăшать. Çакăнтан ĕнтĕ ачасен техникăла интересĕсене тĕрĕс çулпа йарас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем тăвасси тухса тăрать.

Халĕхи вăхăтра ку ĕçе пирĕн республикăра ачасен техникăла йалхуçалăх станцийĕ туса пырать. Ачасен техникăла тата йалхуçалăх станцийĕсене организиленĕ—ленинла комсомол. Техникăпа интересленекен ачасем техникăла станцире хăйсене кирлĕ сведенисем, мастерскойсемпе лабораторисенче ĕçлеме кирлĕ хăнăхусем, канашсем илеççĕ, изобретателствă йенĕпе хăйсен пултарулăхне вăйлатма пулăшу тупаççĕ.

Техникăри çĕнĕ ĕçсене ачасем çийĕнчех тĕпчесе пĕлесшĕн. Станцире ĕçлеме техникăпа интересленекен ачасем вуншарăн, çĕршерĕн пыраççĕ. Çамрăк техникĕсне валли станции тивĕçлĕ ĕçхатĕрсем, станоксем, материалсем пур. Государствă çак ĕçе валли çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ парать. Пирĕн Чăваш республикинчи ачасен техникăла йалхуçалăх станцинче: авиомоделисăм, радио, фото, енергетикă, йалхуçалăх ĕçĕсемпе ĕçлекен лабораторисем пур. Анчах станци ачасем ыйтнине пĕтĕмĕшпех çырлахтарса пыраймасть.

Çамрăк техниксен ĕçĕсене пĕтĕçтерес, лайăххисен опытне ытти сем хушшинче сарас, ачасен техникăла пултарулăхне малала вăйлантарса йарас ĕмĕтпе Чăваш АССР Сутĕç халăх комиссариачĕпе ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ 1938 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшне çитиччен, Чăваш республикинчи пионерсемпе шкул ачисен техникăла ăмăртăвне туса ирттерме йышăннă.

Республикăри техникăла ăмăртăва ачасен техникăла йалхуçалăх станцийĕсем, шкулсем тата уйрăм çамрăк техниксем хутшăнаççĕ.

Чылай шкулсенче техникăла ăмăртăва ирттерме плансем туса хунă. Ăмăрту ачасен пĕтĕм шкулти утренникĕсенчен, пионерсен отрйачĕсемпе техникăла кружоксен пухăвĕсенчен пуçланмала. Пухусенче ачасен республикăри техникăла ăмăртăвĕ çинчен тата ăмăртăва хутшăнмалли татăклă плăн çинчен сÿтсе-йавмала. Çакăнтах ачасене шкулти çамрăк техниксен ĕçĕсемпе паллаштармала, выставкăсем организилемеле.

Кашни шкул тата техникăла йалхуçалăх станцийĕ ăмăртăва хутшăнса, ачасен техникăла пултарулăхне вăйлатас йенĕпе нумай ĕç туса ирттерет. Çĕнĕрен техникăла кружоксем çамрăк авиостроителсен, авиомоделиссен, радиссен-електротехниксен, химиксен, фотографсен кружокĕсем организилеççĕ, нуррисен ĕçне пăхса тухса, тата ытларах вăйлантараççĕ.

Ачасем „ЮАС" нормисене йама хатĕрленеççĕ. Шкулĕнче мăссăлă техникăла вечĕрсем пулса ирттеççĕ, вĕсенче техникă ыйтăвĕсемпе лекцисем пулаççĕ. Шкулсенчи техникăла кружоксемпе ачасен техникăла йалхуçалăх станцийĕсем пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртăва тухаççĕ, пионерсемпе шкул ачисен техникăла пултарулăхне вăйлатас тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илеççĕ.

Кашни шкул техникăла станци, кружок техникăла конкурса хутшăнса, ачасен пĕлĕвĕсене пур предметсемпе те тата çÿлерех хăпартас задачă лартать. Вĕренекен ача вĕренÿ дисциплинисемпе—физикăпа, химипе тата ыттисемпе начар ĕлкĕрсе пырать пулсан, вăл лайăх авиостроител, лайăх радист, лайăх фотограф пулма пултараймасть. Шкулти преподавателĕсем, уйрăмах физикă, хими, биологи преподавателĕсем ачасен техникăла пултарулăхне вăйлатас йенĕпе тимлĕн ĕçлемеле, ачасене çывăххăн пулăшмала.

Ăмăрту ачасен техникăла пултарулăхне кăтартакан шкулти, районри, хулари республикăри выставкăсем организацилениипе пĕтет. Шкулти выставкăна тăратнă чи лайăх моделсен авторĕсем шкултан тивĕçлĕ преми илеççĕ, вĕсен моделĕсене уйăрса илсе районри выставкăна йараççĕ. Районри выставкăран чи лайăххисене—республикăри выставкăна.

Ăмăртăва çакнашкал моделсем хутшăнма пултараççĕ:

автомоделисăмпа—тĕрлĕрен конструкцилĕ автомобилсен (педаллĕ, моторлă, гусеничнăй), троллейбуссен тата ыттисен моделĕсем;

авиомоделисăмпа—хут-çĕлейсен, гидросамолйотсен, планерсен, сывлăш шарĕсен (монголфйерсен), самолйотсен, автожирсен, дирижабльсен тата ыттисен моделĕсем;

електротехникăпа—елементсем; динамо-машинăсем, аккумулйаторсем, електровозсем, трамвайсем електричествăна ăнлатакансем, сигналсем памалли приборсем, електрошăнкрав, светофорсем, телефон, телеграф, електровентилйаторсем тата ыт. те;

радиотехникăпа—тĕрлĕрен конструкцилĕ детекторлă лампăлă радиоприйомниксем, радиопередатчиксем, телевизорсем, тата ыт. те;

машинăсен моделĕсемпе—пăспа ĕçлекен машинăсен, силпе тата шывпа ĕçлекен двигателсен, вăйлă сывлăшпа ĕçлекен моторсен, бензинпа ĕçлекен вĕçмелли аппаратсен, тĕрлĕрен станоксен, крансен, тракторсен, комбайнсен тата ытти машинăсен моделĕсем;

фотографипе—ачасем хăйсем тунă фото-аппаратсем, лейкă аппарачĕсем, ачасем ÿкернĕ фото-картăчкăсем;

шывра ишекен моделсемпе—пăрахутсемпе теплоходсен, крейсерсен, миноносцăсен, катерсен, моторлă кимĕсен, глиссерсен, шывăйĕлтĕрĕсен тата ыттисен моделĕсем.

Выставкă—конкурссем çак срукcенче пулса ирттеççĕ: шкултисем—майăн 6-мĕшĕнче, районрипе хуларисем—майăн 18-мĕшĕнче, республикăри — ийулĕн 1—3-мĕшĕнче.

Ачасен республикăри техникăла конкурсне ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çумĕнчи республикăри конкурс комитечĕ йĕркелесе пырать.

Республикăри конкурсра çакнашкал премисем пулаççĕ:

Пĕрремĕш — ачасен техникăла пултарулăхне вăйлатас тĕлĕшпе пуринчен лайăх ĕçлесе пыракан района Обкомолпа Сутĕç комиссариачĕн куçса çÿрекен йалавĕ тата 1000 тенкĕ укçан.

Иккĕмĕш — ачасен техникăла пултарулăхне организацилес тĕлĕшпе чи лайăх ĕçлекен шкула пĕр преми — 500 тенкĕ укçан.

Виççĕмĕш — лайăх ĕçлекен ачасен техникăла йалхуçалăх станцине 500 тенкĕ укçан.

Тăваттăмĕш — чи лайăх çамрăк техник-изобретателсене йапалапа—5 преми, кашни йапали 100 тенкĕ тăрать.

Пилĕкĕмĕш — чи лайăх техникăла кружоксене йапалапа—5 преми, кашни йапали 100 тенкĕ тăрать.

Улттăмĕш — республикăри конкурс комитечĕ, хăй шутĕнчен, пĕр чи лайăх техникăла станци директорне тата пĕр шкулăн пуçлăхне Харьковри тата Ленинградри пионерсемпе октйабрйонoксен дворецĕсене йарать.

Çиччĕмĕшĕ — конкурс комитечĕ чи лайăх çамрăк техниксенчен 10 ачана Харьковри тата Ленинградри пионерсен дворецĕсене йарать.

Ачасен техникăла ăмăртăвĕ политикăла пысăк ĕç. Ăна ăнăçлăн ирттерме республикăри пур организацисем те пулăшмала.

Рожков.

Нумай ачалă амăшсен канашлăвĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Йанварĕн 25-мĕшĕнче нумай ачалă амăшсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Совет влаçĕ хĕрарăмсен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшни çинчен тата хĕрарăм колхозра пысăк вăй пулса тăни çинчен парти райком секретарĕ Кудрйашов йулташ, хĕрарăмсен сывлăхне сыхласси çинчен районри акушеркă Степанова йулташ доклад туса пачĕç.

Нумай ачалă амăшсем хăйсене государствă пособи памала тунăшăн питĕ савăнаççĕ, партипе правителствăна тата Сталин йулташа чĕререн тав тăваççĕ.

— Пире ĕлĕк государствăран пулăшу парассине епĕр нихăçан та шутлама пултарайман. Пирĕнтен ĕлĕк „пĕр кĕтÿ ача амăшĕсем" тесе мăшкăлаччĕç. Çак ылханлă вăхăт иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Партипе правителствă пире ачасене тăрантарма, вĕсене тумлантарма государствăран укçа парса пулăшмала турĕç. Епĕ çавăншăн питĕ савăнатăп. Хамăн ачасене лайăх тăрантаратăп. Вĕсене вĕренме кĕнекесем, хутсем çителĕклĕ таран илсе паратăп,—тет Йамбахтинăри Дарийа Игнатйева.

— Нумай ачана тумлантарса, тăрантарса çитерме питех те хĕнччĕ. Халь Совет влаçĕ пирĕн ачасене тумлантарчĕ, вĕсене тăрантарать. Çакăншăн епĕ чĕререн савăнатăп. Пире, нумай ачалă амăшсене, пособи памала тунăшăн партипе правителствăна тата Сталин йулташа чĕререн тав тăватăп,—тет Вăрманкасри Йелена Шчукина.

Канашлу нумай ачалă амăшсене государствă пулăшу памала тунăшăн партипе правителствăна тата Сталин йулташа саламласа резолюци йышăнчĕ. Хĕрарăмсем çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсене хастарлăн пулăшма пулчĕç.

Ст. Улангай.

Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн кружокĕсене организацилерĕç

Мартынкассинче (Трак р.) халăхсене тĕн сийенĕ çинчен каласа ăнлантарнă хыççăн, йалта Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн кружокĕсене организацилерĕç. Пĕрне комсомолецсемпе йалти çамрăксем валли, унта 15 çын тăрать, теприне—колхозниксем валли. Ку кружокра 20 çын. Кружоксене И. Терентйев йулташ йертсе пырать.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Китай çар сводкисенче йулашки кунсенче Китай çарĕсем Тяньцзин—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр тата çурçĕр участкинче татăклăнрах çапăçнине паллă тăвассĕ (Çурçĕр Китай). Йанварĕн 27—28-мĕшсенче Шаньдун провинцинче çапăçусем Цзинина Мыньин хулисем тавра (Йаньчжоуран хĕвелтухăçнеле) пулса иртнĕ. Икĕ хулине те Китай çарĕсем çавăрса илнĕ: Йанварĕн 29-мĕшĕнче, виçĕ кун хушши хупăрласа тăнă хыççăн, Китай çарĕсем Мыньине тытса илнĕ. Хулана штурмланă вăхăтра Йапонин икçĕр салтак ытла вилнĕ. Йанварĕн 27-мĕшĕнче Китай çарĕсем çавăн пекех Цзуйфу хулине те йĕритавра çавăрса илнĕ. Йапонецсем пит вăйлă ункăна лекнипе халь вĕсем урăх пулăшу илеймеççĕ.

Вăтам Китайра Тяньцзин—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче йапонецсем Мингуана тытса илнĕ хыççăн (Нанкинран çурçĕреле çĕр километрта) Йапони çарĕсем тапăнса пырассине чарса лартнă.

Тĕп фронтăн кăнтăр секторĕнче çапăçусем Ханчжоу районĕнче пулса пыраççĕ.

Тĕп фронтăн хĕвеланăç пайĕнче Йанцзы йуханшыв хĕрринчи Уху хули таврашĕнче татти-сыпписĕр çапăçусем пыраççĕ. Йапони подкреплениисем çитсе пыраççĕ пулин те, Китайăн регулярлă çарĕсем партизан отрйачĕсемпе пĕрле тапăнсах пыраççĕ. Çине тăрса çапăçнă хыççăн китайецсем Ухуран кăнтăр-хĕвелтухăçнеле хĕрĕх километрта ларакан Ваньчжи хулине тытса илнĕ. Хулара урам хушшинчех çапăçусем пулса иртнĕ. Вăл çапăçусем вăхăтĕнче йапонецсем нумай çуртсене çĕмĕрсе, хуларан тухса тарса çăртсем хушшинче çирĕпленнĕ. Йапонин çурран çарне пулăшма крапасем пынă.

Китай хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: Аньхуейпе Цзйансу провинцисен чиккисенче Китай партизанĕсен активлăхĕ кунсеренех ӳссе пырат, вĕсем ытларах та ытларах йăнăçлăн çапăçаççĕ.

Партизансем йапонецсенчен Тайху кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнеле пилĕк хула, вăл шутрах Лансе та Гуанде хулисене çапăçса илнĕ.

Кăнтăр Китайра йанвар уйăхĕн 20 кунĕ хушшинче йапонецсем, бомбăсем пăрахнипе хĕçпăшал илсе пырассине чарса лартас майпа, Кантон—Ханькоу чукунçулĕн кăнтăр участки çине 31 хут тапăннă. Йапонецсем татти-сыпписĕр тапăнаççĕ пулин те, чукунçул çинче ĕçлекен рабочисем паттăрăн ĕçлеççĕ, çул тăрăх çӳрессе чарăнманпа пĕрех. Пассажир пуйăсĕсем йĕркелĕ çӳреççĕ.

(ТАСС).

Шанхайра йапонецсене хирĕç кĕрешни

Шанхайра йапонецсем пит нумай çынсене арĕслеççĕ. Çапах та унта йапонецсене хирĕçле йухăм чарăнмасть. „Чайна пресс“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, йанварĕн 29-мĕшĕнче, 1932 çулта Шанхайа йапонецсен тапăнувĕнчен сыхласа паттăрăн çапăçнă кун, йутçĕршывсен кварталĕнче тата французсен концессийĕнче темиçе çĕрте бомбăсем пăрахнă. Йапонин аслă консулĕн çуртне, полици бӳроне, пукăнеле „правителствăн“ цензурă бӳроне бомбă пăрахнă.

Çак иртнĕ кунсенче Путун районĕнче икĕ хĕрача йапони салтакĕсен ушкăнĕ çине (300 салтак пулнă) алăпа ывăтмали гранатăсем пенĕ. Гранатăсем çурăлнипе нумай салтаксем вилнĕ тата нумайĕшĕ суранланнă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Йанварĕн 29-мĕшĕнче кăнтăр фрончĕн тĕрлĕ сектăрĕсенче республикă çарĕсем çаплах пăлхавçăсене хĕстернĕ. Пăлхавçăсем Торре ла Карсел патне (Теруел—Калатайуд чукунçулĕ çинче) пухăннă пулнă. Республикă артиллерийĕ вĕсене, пысăк çухатусем тутарса, салатса йанă.

Мадрид фронтĕнче, университет хулинче, пăлхавçăсем çĕр айĕнчен чавса пынă. Çавăн çинчен республиканецсем пĕлнĕ те хирĕç минă сиктерсе йанă. Минă сиктерсе йанипе пăлхавçăсенне пит нумай çĕмĕрнĕ.

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăр фронтĕнче, йанварĕн 28-мĕшĕнче республикă çарĕсем, темиçе кун хушши хатĕрленнĕ хыççăн, Вилйафранка де Лос Баррос йенеле малала кайнă,—çав вырăнти пăлхавçăсем йышăнса тăраканскер, пит паха пункт.

Республиканецсем кăнтăр фрончĕн çав участкинче тăвакан ĕçсем вăрçă малашне мĕнле пулса пырассишĕн калама çук пысăк вырăнта тăраççĕ, тесе çырать пичет. Унта республиканецсен позицийĕсем пăлхавçăсем йенеле савăл пек кĕрсе кайнă. Вăл республикă çарĕсемшĕн пит паха.

Йанварĕн 28-мĕшĕнче республикă авиацийĕ Саламанкă çине тата тепĕр хут бомбăсем пăрахнă. Çав хулара пăлхавçăсен истребителсем пит нумай. Анчах вĕсем, республикă авиацийĕ нумай пулмасть тапăннă хыççăн ураланайманнипе, республикă самолёчĕсене хăйсен задачине пурнăçа кĕртме чарма пултарайман.

(ТАСС).

Франци пичечĕ Германипе Итали хушшинчи вăрттăн килĕшӳ çинчен

ПАРИЖ, йанварĕн 25-мĕш (ТАСС). „Евр“ хаçтара Табуи çапла çырать: Германипе Итали правителствисем Вăтам тата Балкан Йевропăри çĕршывсен çĕр пуйанлăхĕсемпе Германипе Итали валли усă курас пирки иккĕшĕ пĕрле економикăлă план тăвасси çинчен калаçса татăлнă. Ку план тăрăх çимĕçпе чĕрĕ таварсем тăратас тата Германипе Италийе тĕрлĕ кирлĕ йапаласем тăратас тĕлĕшпе економикăлă генералнăй штаб тумала.

Германипе Итали, килĕшӳ тăрăх, Румынипе, Польшăпа тата Кăнтăр-Америкă çĕршывĕсемпе усă курса, Лигăнапине хирĕç атакă тăваççĕ.

Ку вăхăта Германи Австрийе хăйĕн çумне пĕрлештерме суйласа илет.

Испанийе çар хатĕрĕсем пысăккăн йарасси малала та пулмала, тесе шутлаççĕ. Табуи сведенийĕсем тăрăх, Франко Германирен 300 самолёт, йăвăр артиллери тата танксем йама ыйтать.

„Ордр“ хаçат кун çумне çакăн пек хушать: Германипе Итали хушшинче Испани пирки тунă килĕшӳре Франко генерала 50 пин Итали салтакĕ йарасси çинчен ĕç пырать.

Вăрçăна кирлĕ хатĕрсем: тупăсем, çар снарйаженийĕсем, телеграф аппаратури, автомобилсем, чукунçул хатĕрĕсем, фармацевтла препаратсем т. ыт. те тăратассипе пулакан расхутсене Германи хăй çине илет.

„Рабочий“ йатлă пароход путнă

МУСКАВ, 29—I (ТАСС). „Рабочий“ пароход кăçал Арктикăра хĕл каçма йулнăччĕ. Вăл Лаптевсен тинĕсĕнче пăр хушшинче тăнă.

Йанварĕн 21-мĕшĕнче, çĕрле, „Рабочий“ пароход тавра пăр хĕсĕнме пуçланă. Пăр çав тери вăйлă хĕсĕннипе, карапăн çӳлти палуби таранах пăр купи купаланнă, хӳре тытса пымалипе карапăн хыçри пайĕ пăр купи айне пулнă.

Йанварĕн 22-мĕшĕнче 23 сехетре (вырăнти вăхăтпа) пăр татах тепĕр хут, малтанхинчен те вăйлăнрах хĕсĕнме пуçланă. Пăр çавăн пек хĕстернипе карапăн шыври пайĕнче сулахай борт—хыçри пайран пуçласа машинсем таринтатăлса кайнă тата трӳм шăтнă.

Çапла йăвăр аманнă хыççăн, „Рабочий“ пароход йанварĕн 23-мĕшĕнче 0 17 минутра шыва путнă.

Пароход каманди чылай апат-çимĕç тата хаклă хатĕрсене пароход çинчен пăр çине кăларса йулма ĕлкĕрнĕ. Кайран çав апат-çимĕçе тата хаклă хатĕрсене „Камчадал“ йатлă пароход çине куçарнă.

„Рабочий“ пароход каманди путакан карап çинчен тухнă чухне пит дисциплинăлă та йĕркелĕ пулнă,—çапла вĕсем совет морйакĕсен тӳсĕмлĕхне кăтартнă. Пароход çинче пулнă çынсем пурте сывă. Халь вĕсем сывăхра тăракан „Камчадал“ пароход çине тата „Ленин“ ледокол çине куçнă.

ХРОНИКĂ

Чăваш АСС Республикинчи Ĕçтăвакан тĕп комитет президиумĕ Семен Александрович Александров йулташа Чăваш АССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх комисарĕн заместителне лартнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мадрид фронтĕнчи республикă çарĕнчи боецсен шкулĕ. (Сойузфото).

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн йубилейне хатĕрленеççĕ

Пуратнă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн мухтавлă йубилейне Совет Сойузĕнчи ĕçсынисем пысăк праçнике хатĕрленнĕ пек хатĕрленеççĕ.

Ленин хулинчи театрсем йубилей тĕлне вырăнсене тухса çӳрекен 90 бригадă организациленĕ. Вăл бригадăсем шефа илнĕ Ленинград çар округĕн чаçĕсемпе подразделенийĕсенче чылай концертсемпе спектакльсем лартса пĕраççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă тĕле сывлăшри тата химилĕ тапăнусенчен хӳтĕленме вĕренмели çĕнĕ кружоксем тăваççĕ.

Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче Осоавиахим членĕсен хисепĕ ӳсет. Ленинградри чылай çуртсенче обшествăн хаваргăхăй тĕллĕн ĕçлекен пуçламĕш организацисем тунă, ПВХО командисем йĕркеленĕ.

Йубилейе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чаçĕсенче пысăккăн хатĕрленеççĕ.

Ленинград Çар Округĕнчи майор Белоусов йулташ йертсе пыракан Н-ски кавалери подразделенийĕсенче мĕн пур боецсем, командирсем тата политработниксем çар ĕçне тата политикăна лайăх вĕренес тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăртува хутшăннă. Хĕрлĕ çар йурăçисем ташшисен ансамблĕ тунă, унта 70 боец хутшăннă.

Хĕрлĕ йалавлă Балти флочĕн форчĕсенче, чаçĕсенче тата карапĕсем çинче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă йатпа пыракан социалисăмлă ăмăрту анлăн саралнă.

„Марат“ линкор çинче командир-орденоносец Фиалкин йулташ подразделенинче краснофлотецсем Колотилов, Фокин Берзин тата ытти йулташсем нормăна 200 процент тултараççĕ. Н-ски карап çинче трӳмри машинисен отделени командирĕ Арсенйев йулташ, ĕçе рационализацилесе, нормăна 1000 процент тултарма пултарнă.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа пыракан социалисăмлă ăмăртури отличниксене пĕтĕм флотри хисеп хăми çине кӳртеççĕ.

(ТАСС).

Мускав облаçĕнчи районри хаçат редакторĕсен канашлувĕ

Йанварĕн 28-мĕшĕнче ПСК(б) Парти Мускав Комитетĕнче районри хаçат тата облаçри пысăк предприйатисенчи нумай тиражлă хаçат редакторĕсен облаçри канашлувĕ пулса иртнĕ.

Канашлура ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ йышăннă решенийе май пичет задачисем çинчен, çавăн пекех суракине хатĕрленес тата колхозсенче социалисăмлă ăмăртува сарса йарас ыйтусене сӳтсе-йавнă.

Пĕрремĕш ыйтупа тухса каласнă йулташсем районри пичет ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн Пленумĕ сивлĕнĕ йăнăшсене сахал мар тунине кăтартса панă. Чылай хаçатсем парти членĕсем çине чунсăр-бӳрократла пăхнă, тӳрĕ ĕçлекен парти членĕсене лапăртăнă елекçĕсемпе карйеристсене тăрă шыв çине кăларман.

Канашлура тата çавăн пекех Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çирĕм çул тултаракан уйава хатĕрленес ыйтува сӳтсе-йавнă.

(ТАСС).

Шупашкар хулинче електроенергипе усă курас йĕркесемпе правилăсем çинчен

Шупашкар хула Совечĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă

ОБЙАЗАТЕЛЬНĂЙ ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1931 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче „Обйазательнăй постановленисем каларасси çинчен“ йышăннă постановлени тăрăх, електроенергипе тĕрĕс усă курас тĕлĕшпе Шупашкар Хула Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

1. а) уйрăм çынсене тата учрежденисемпе предприйатисене хăйсем тĕллĕн електричествă çутипе усă курма;

б) мĕн чухлĕ лампăпа тата мĕн чухлĕ хăватпа усă курма ирĕк панинчен иртсе ытлашши усă курма—татăклăнах чарас.

Учреждениcенче кăçхи вăхăтра заньатисем пулакан пӳлĕмсенче çĕç електричествă çутипе усă курмала, заньатисем пĕтнĕ хыççăн дежурнăй пӳлĕмсĕй пуçне ытти пӳлĕмсенче пуринче те çутă сӳнтермеле.

2. Електричествăпа ăшăтмали приборсемпе (утюгсемпе, шыв вĕретмелисемпе, кастрюльсемпе т. ыт. те), вăл приборсене Водосветăн абонент уйрăмĕнче регистрациленĕ хыççăн усă курма йурать.

3. Çутă линийе водосвет монтĕрĕсем çеç тата абонент çырса панă зайавлени тăрăх дирекци нарйад панă хыççăн çеç кӳртме пултараççĕ.

4. Пур çĕнĕ стройкăсем те електричествă çутипе усă курма водосвета зайавкă тăратса унпа килĕштермеле тата монтаж тума ирĕк илмеле.

5. Водосвет, ССР Сойузĕн Халăх Комисарĕсен Совечĕ 1931 çулхи августăн 16-мĕшĕнче електроенергипе усă курнăшĕн тӳлемели сруксем çинчен йышăннă постановлени тăрăх тĕрĕс ĕçлесе пырса, парăмне тӳлемен потребителсене счотчик кăтарту илнĕ хыççăн вунă кунран кайран нимĕн асăрхаттарса тăмасăрах кăларса пăрахмала. Електроенергипе усă курнăшăн тӳлесе тăма çакăн пек сруксем тăвас:

а) счотчиктĕ пур учреждениcемпе организацисем тата хулара пурăнакансем валли счотчик кăтартăвĕсене илсе расчот кĕнеки çине çырсан пилĕк кунччен;

б) счотчикĕсем çук учреждениcемпе организацисем тата хулара пурăнакансем валли, електроенергипе усă куракан кашни уйăхăн пилĕкĕмĕш кунĕччен, урăхла каласан, уйăх пĕтиччен 25 кун малтан;

в) вăхăтра тӳлеменшĕн тӳлев пуçланса кайнă кунран тӳлесе татнă куна çиттиччен пĕрлешӳлĕ сектортан 0,05 процент, уйрăм сектортан 0.1 процент пени илмеле.

6. Учреждениcемпе организацисен руководителĕсене електроенергипе тирпейлĕ усă курнине тата расчотсене пăхса пыма ответлă çынсене, вĕсен хушаматне, йатне тата ашшĕ йатне абонент кĕнеки çине çырса уйăрса хума хушас.

7. Моторлă установкăсем пур предприйатисем, çулталăкри вăхăт тăрăх кашни уйăх валли водосвет туса панă графике çирĕп тытса ĕçлесе пымала.

8. Електричествă оборудованилĕ пӳлĕме урăх потребител йышăнсан, пӳлĕме йышăнна потребител, çурт управленине çирĕплеттерсе, пӳлĕме йышăнсан, 3 кунран кайа йулмасăр енергипе усă курасси çинчен зайавлени çырса памала.

Çуртран тухса кайакан потребител електроенергипе усă курма чарăнас срук çитиччен 7 кун малтан ун çинчен електроенерги паракан предприйатийе çырса пĕлтермеле.

Çӳлте кăтартнă йĕркесене туманшăн електроенерги паракан предприйати çав пӳлĕм çинче тăракан парăма йе çав çуртран куçса кайнă потребителрен йе çав çурта çĕнĕрен йышăннă потребителрен електроенерги паракан предприйатипе условисем çинчен вăхăтра татăлмасан, пĕтĕмĕшпех илме пултарать.

9. Електроенерги паракан предприйати, ĕлĕк усă курнă пӳлĕмшĕн парса татман потребителе, ĕлĕкхи парăмне пени мĕнĕпех парса татиччен, вăл потребител хăй йачĕпе енерги илсе тăма килĕшет-и, йе урăх çын йачĕпе килĕшет-и, пурĕ-пĕрех ток памасан та пултарать.

10. Електроенергипе счотчиксĕр усă куракансене тĕрĕсленĕ чух лампă йе ватт хисепне, ун çинчен електроенерги паракан предприйатийе пĕлтермесĕрех, ӳстернине тупсан, потребител ытлашши вăхăтпа усă курнăшăн иртнĕ хут тĕрĕсленĕ кунран пуçласа çак куна çити виçĕ хак тӳлемеле. Унчченхи хăвата чакарасси çинчен потребител електроенерги паракан предприйатийе 5 кун малтан пĕлтермеле. Унсăрăн потребител малтан зайавлени панă тăрăхах тӳлесе тăрать.

Çирĕплетнĕ хăвата улăштарассине кашни уйăхăн пĕрремĕш кунĕнче çеç тума йурать.

11. Çак постановленийе пăснăшăн айăплисене административлă йĕркепе укçан 100 тенке çити штраф тӳлетереççĕ, йурийех пăсакансем уголовнă йĕркепе ответ тытаççĕ тата вĕсене електроенерги пама та чарăнаççĕ.

12. Пломбăсăр йе розеткăсăр сĕтел çине лартакан лампăсемшĕн 60 ваттлă лампă шучĕпе тӳлев илеççĕ, патрон çинчи пломбăна йе розеткăна илнĕшĕн ответ тытараççĕ.

13. Абонемент уйрăмĕнче регистрацилемен електричествăпа ăшăтакан приборсемпе (утюгсемпе, чейниксемпе, шыв ăшăтмалисемпе т. ыт. те) усă курнине тупсан, електричествăпа ăшăтмали прибор хакĕнчен 5 хут ытларах штраф илеççĕ.

14. Çак постановленийе пурнăçланине тĕрĕслесе тăрас ĕçе Водосвет контролĕрĕсем тăваççĕ.

Çак постановлени ăна пичетлесе пĕлтернĕ кунран пуçласа ĕçе кĕрет тата вăл икĕ çула пырать.

Хула Совечĕн председателĕ Каплин.
Секретарĕ Кобозова.

С. К. Коротков йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарне лартасси çинчен

Чăваш АСС Республикĕнчи Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă.

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнать: Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председател заместителне Сергей Ксенафонтович Коротков йулташа Чăваш АСС Республикĕн Çĕрĕç халăх комиссарне лартас.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЙЕВА

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар хули, 1938 ç. Йанварĕн 31-шĕ.

Н. Н. Чернов йулташа Чăваш АССР Сывлăха сыхлав халăх комиссарне лартасси çинчен

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă.

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнать: Николай Николайевич Чернов йулташа Чăваш АСС Республикĕн Сывлăха сыхлав халăх комиссарне лартас.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет З. АНДРЕЙЕВА.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар хули, 1938 ç. Йанварĕн 31-шĕ.

Студент-йĕлтĕрçĕсен похочĕ

Сĕнтĕрвăррирчи Вăрман ĕç техникум Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнине чаплăн паллă тăвас шутпа студент-йĕлтĕрçĕсен походне организацилерĕ. Походăн маршручĕ: Сĕнтĕрвăрри—Советк — Суводск (Киров облаçĕ)—Сĕнтĕрвăрри. Çул вăрăмĕшĕ кайла-майла илсе шутласан 600 километра йахăн пулать. Командăра—тăватă студент, командирĕ Н. Смойев йулташ.

Çул çинче чарăннă вырăнсенче вĕсем массă хушшинче политикăлă-массăлă ĕçсем туса ирттереççĕ, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çирĕм çул тултарни çинчен, Осоавиахим ĕçне, физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатасси çинчен, Сталинла Конституци тата ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен ĕçсынисене каласа ăнлантараççĕ.

Суводскине çитсен, командă унти Вăрман ĕç техникумĕпе ăмăртса ĕçлеме тунă социалисăмлă ăмăрту договорне çирĕплетет.

Похода кайакан йĕлтĕрçĕсем техникумри пĕтĕм студентсем умĕнче хăйсен умне лартнă ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме шантарчĕç.

Д. Стеклов

Лайăх ĕçлекен почтальон

Ишлей районĕнчи „Алино“ колхоз членĕ Н. Винокуров йулташ Алино ялсоветĕнче кăçалхипе 5-мĕш çул почтальон пулса ĕçлет. Вăл хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра тата тĕрĕс илсе пырса парать. Колхозниксемпе йединоличниксене хаçат усси çинчен каласа ăнлантарать. 1938 çулшăн пурĕ 1650 тенкелĕх хаçат-журнал сарнă.

Çĕнĕ çулшăн хаçат-журналсем нумай сарнăшăн тата хăйĕн ĕçне йаланах тăрăшса туса пынăшăн Йшекри почтă уйрăмĕ ăна 95 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

А. Садыков.

Кашкăр тытрĕç

ЕЛĔК. Мăн Пакăшри „Прогресс“ колхоз членĕсем йанварĕн 16-мĕшĕнче уйра пĕр кашкăр тытрĕç. Колхозниксем кашкăр тирне сӳсе государствăна сутаççĕ. Кашкăр тытнăшăн вĕсем премии илеççĕ.

С. Рйабиновский.

Кино кăтартмаççĕ

ТУТАРКАС. Йатманпа Çатракассинче кино кăгартманни 5-мĕш уйăх çине карĕ ĕнтĕ. Хаçатсем çинче çырнă тăрăх, халĕ пур вырăнсенче те „Пугачов“, „Петр I“, „Ленин в Октябре“ йатлă кинокартинăсем кăтартаççĕ. Колхозниксем асăннă кинокартинăсене питех те курасшăн.

К. Пушкин.

7000 çын ытла курнă

Ианварĕн 24—28-мĕшĕсенче пилĕк кун хушши Вăрнарти райклубра „Ленин в Октябре“ кино-картинă пычĕ. Ку картина пурĕ 7000 çын ытла курчĕç.

Колхзниксем, шкулта вĕренекенсем 18—20 километртан курма килчĕç. Йанварĕн 28-мĕшĕнче ачасен сеансĕ 3 хут пулчĕ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Мелиоторф пĕлтерĕвĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта майăн 27-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх тата Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 1938 çулхи йанварĕн 8-мĕшĕнче кăларнă приказĕ тăрăх,

Мелиозем, пайĕнчен уйăрса хăй тĕллĕн ĕçлекен Мелиоторф пайĕ туса хунă. Мелиоторф пайĕ-Мелиораципе торф ĕçĕсене туса пырать.

Мелиоторф пайĕ пур колхозсене те Мелиоративлă—гидротехнически строителствă ĕçĕсене тутарнăшăн договорсем тăрăх тӳлемели парăма 1938 çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен тӳлесе татма ыйтать. Расчот счочĕ № 156/858 Госбанкăн Чăваш республикинчи уйрăмĕнче. Парăмсене тӳлесе татман колхозсем малала Мелиоторф специалисĕсен ĕçĕсемпе усă кураймаççĕ. Пĕрлех, Чăваш АСС Республикĕнчи пур колхозсене те 1938 çулхи строителствă пирки çĕнĕ договорсем тума ыйтатпăр.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Мелиораципе Торф пайĕ.

Çыхăну управленин автобазине йалан ĕçлеме кирлĕ:

1. Автомашинăсене лайăх пĕлекен опытла електрик
2. 6-мĕш тата 7-мĕш разрйадсенчи слесăрсем
3. Пĕр çултан кайа мар стажлă шоферсем

Адрес: Çыхăну çурчĕ, 2-мĕш хутлăх 30-мĕш пӳлĕм. Телефон №-4—07

3—2

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн физкультурă инструкторĕсемпе кĕçĕн преподавателсем хатĕрлекен курса

ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ

КУРС ÇАКСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ:

районĕçтăвкомсем тата республикăри ирĕклĕ спорт обществисем валли квалификацилĕ инструкторсем, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсенчи физкультурăпа вĕрентекен кĕçĕн преподавателсем.

КУРСА ÇАКСЕНЕ ИЛЕÇÇĔ:

арçынсемпе хĕрарăмсене 17 çултан пуçласа 35 çулхисем таран, туллимар вăтам шкул чухлĕ пĕлӳ илнисене тата пĕрремеш сыпăкри ГТО значок нормисене панисене

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 6 УЙĂХ

Зайавленипе пĕрле çак документсене тăратмала: туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинникне); çурални çинчен справкă; физкультурă йе комсомол организацинчен илнĕ характеристикă; пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене пани çинчен справкă; ĕçленĕ çĕртен хăтарни çинчен справкă; айакран килес текенсем документсемпе пĕрле 40 пуслăх маркă йăраççĕ.

ЗАЙАВЛЕНИСЕНЕ 1938 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 15-МĔШЧЕН ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Зайавленисемпе документсене çак адреспе йамала: **ЧАССР, Шупашкар хули, Ленинградская урамĕ, 16, Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.**

Курса вĕренме илнисене вĕреннине кура 150 тенкĕрен 250 тенке çити стипенди тӳлеççĕ. Айакран килекенсене валли общежитипе выртса тăмали хатĕрсем пулаççĕ.

Курсра вĕренме 1938 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнаççĕ. Вĕренме физкультурă Комитечĕ чĕннипе кăна килмеле.

Курса вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 2 çултан кайа мар Чăваш АСС Республикинче ĕçлемеле.

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа Спорт ĕçĕсен Комитечĕ.

3—2

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 55. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. I—II п. л.

К